Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

77 (7502) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи сентябрĕн (авăн) 19-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## В. Путин: “Белгород облаçĕпе Чăваш Ен наци проекчĕсене пурнăçа кĕртес енĕпе – лидерсем”



Хамăр ĕçе пуçăниччен эпĕ Чăваш Ене кайса килни çинчен темиçе сăмах калас тетĕп. Наци проекчĕсем мĕнле пурнăçланасси пирки эпир нумай иккĕленнĕ. Пирвайхи утăмсем те ансат пулмарĕç. Вĕсене сӳтсе явнă чух (икĕ çул çурă каяллах сӳтсе явма пуçланă), паллах, иккĕленӳ нумай пулчĕ: вĕсем ăнăçлă ĕçлĕç-и, вĕсем мĕн парĕç, ку укçана кăларса пăрахни пулмĕ-и? Укçа-тенкĕ хатĕр мар инфратытăма, хатĕрлемен кадрсем патне кайнине кура укçана ахалех тăкакласран, нимĕнле усă та пулмасран хăрарăмăр.

Эпĕ питĕ кăмăллă, апла мар, пачах та тепĕр майлă пулчĕ.

Ман шутпа, тĕп кăтарту – çынсем патшалăх хăйсен енне çаврăннине ĕненни. Ку пĕрремĕшĕ.

Иккĕмĕшĕ. Çынсем пурнăç ыйтнипе килĕшӳллĕн улшăнма пуçларĕç. Куçсем çунаççĕ. Çунаççĕ куçсем! Ĕнер Чăваш Енре мана пĕр вĕрентекен, компьютер техникине алла илекенскер, çапла каларĕ: “Пенсие кайма вăхăт. Пенсие каяс килмест. Интереслĕ. Ĕçлеме интереслĕ”. Çакă чи кирли. Тĕп кăтарту – çынсен ĕçлес кăмăл çурални, вĕсем паян ăçта вăй хураççĕ – çавăнта тухăçлă ĕçлес тени.

Демографи проекчĕ те хăйĕн кăтартăвĕсене кӳрет-кӳретех. Çакă та савăнтарать. Пирĕн сирĕнпе пĕрле шухăшласа пăхмалла: ку енĕпе ĕçĕмĕр тата та тухăçлăрах пултăр тесен тата мĕн тумалла? Уйрăм регион-лидерсенче çеç мар, пĕтĕм çĕршывĕпе. Белгород облаçĕ, Чăваш Ен, паллах, нацпроектсемпе ĕçлес енĕпе – лидерсем. Чи кирли, чи пĕлтерĕшли – шăпах çакăнта нацпроектсене хăйсен регион шайĕнчи аталану программисемпе пĕтĕçтерсе отрасльсенчи анлă улшăнусене çул пани.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

**Сăн ӳкерчĕкре: В.В. Путин Тренккасси шкулĕнче.**

**Конференци**

## Пĕрлехи ĕçĕн пĕлтерĕшĕ пысăк

**Раççей Президенчĕ Владимир Путин 2007 çулхи раштав уйăхĕн 2-мĕшĕнче РФ Патшалăх Думин суйлавне ирттермелли çинчен указа алă пусса çирĕплетнĕ хыççăн суйлав кампанийĕн хĕрӳ тапхăрĕ пуçланчĕ. Республикăн çитес вăхăтри (сахалтан та тепĕр пилĕк çулхи) малашлăхĕ, социаллă-экономика аталанăвĕ Чăваш Ен суйлавçисем хăш партие хăйсен сассине ытларах панинчен килет.**

Акă 2003 çулхи суйлавра Тутарстан Республикин суйлавçисен 60 проценчĕ тата Мордва Республикин суйлавçисен 76 проценчĕ “Пĕрлĕхлĕ Раççей” («Единая Россия») партишĕн сасăланă. Ку таранччен федераци бюджетĕнчен шăпах çак субъектсене чи нумай дотаци панă. Тутарстан – 15-20 миллиард тенкĕне яхăн, Мордови 5-7 миллиард тенкĕ илме пултарнă. Танлаштарса пăхма: Чăваш Енĕн çав тапхăрти çулталăк бюджечĕ 10 миллиард тенкĕ пулнă. ЧР Патшалăх Канашĕн иртнĕ суйлавĕнче “Пĕрлĕхлĕ Раççей” 52 процент сасă пуçтарчĕ. Çакăн хыççăн Патшалăх Думин чи йышлă фракцийĕ Чăваш Республикине ытларах пулăшма (2 миллиард тенкĕ нумайрах е 41 процент) пуçларĕ. “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин ертсе пыракан органĕсенчи федераци министрĕсемпе депутатсем килĕштерсе ĕçлени Чăваш Енри пурнăçа лайăхлатма чылай пулăшать.

Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче Шупашкарта Пĕтĕм Раççейри “Пĕрлĕхлĕ Раççей” («Единая Россия») партин Чăваш Енри регион уйрăмĕн XII конференцийĕн иккĕмĕш тапхăрĕ иртрĕ. Унăн ĕçне Чăваш Республикин Президенчĕ, Пĕтĕм Раççейри “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Аслă канашĕн членĕ Н. Федоров, РФ Патшалăх Думин депутачĕ П. Семенов, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнчи “Пĕрлĕхлĕ Раççей” фракцин депутат-членĕсем, вырăнти политканаш секретарĕсем, предприятисемпе организацисен представителĕсем хутшăнчĕç.

Конференцие Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕ, “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Чăваш регион уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ Михаил Михайловский уçрĕ.

– Пирĕн парти вăйлă. Кунта, Чăваш Енре, Раççей Федерацийĕнче мĕн пулса иртнипе кăсăкланакан тӳрĕ чунлă çынсем пуçтарăннă, – терĕ республика ертӳçи Николай Федоров. – Кунта пуçтарăннисене экономикăри, ялти, промышленноçри, сывлăх сыхлавĕнчи, вĕрентӳри, экологири улшăнусем интереслентереççĕ. Çакăн пек вăйлă партин организацине хисеплетĕп, мĕн пур тĕллеве пурнăçа кĕртме пултарасса иккĕленместĕп.

Президент çавăн пекех “АПК аталанăвĕ” наци проекчĕ ăнăçлă пурнăçланни çинчен каласа пачĕ. “Ялта пурăнакан 25 пине яхăн çемье 3,5 миллиард тенкĕлĕх çăмăллăх кредитпа усă курнă. Çакă çĕршыври чи пысăк кăтарту. Çавăн пек йыш çурални ял халăхĕн сывлăхне çирĕплетес, унăн йывăр пурнăçне çăмăллатас ĕçри пысăк çĕнтерӳ. Çак çынсем – ĕçлесе пысăк çитĕнӳ тума, хăйсене те, ачисене те пулăшма май пуррине çирĕплетекен тĕслĕх”, – терĕ Н. Федоров. Юлашкинчен вăл Чăваш Ене килнĕ Раççей Президенчĕн Владимир Путинăн визитне пĕтĕмлетрĕ. Республикăри ĕç-хĕле В. Путин мĕнле хакланипе паллаштарнă май çакна палăртрĕ: “Пысăк хака эпир пурте, пирĕн ĕçтешсем, пирĕнпе пĕр шухăшлă çынсем тивĕçнĕ. Сире пархатарлă ĕçшĕн тав тăватăп тата та пысăкрах кăтартусем тума сунатăп. Кунсăр пуçне çитес суйлаври кăтартусенчен пирĕн хуласемпе ялсен аталанăвĕ нумай килет. Ăнăçу сире”.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

**“Радиохум – хаçат страницинче. Ыйту пур: хуравне пĕлесшĕнччĕ”**

## Социаллă нормăна кура шутлаççĕ

**Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ кăçалхи августăн 10-мĕшĕнче “Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн хăш-пĕр постановленийĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен” 195-мĕш номерлĕ постановлени кăларчĕ. Граждансен уйрăм категорийĕсене çурт-йĕрпе коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн тӳлессинче социаллă пулăшу парассине ӳстерес тĕллевпе тунă çак йышăнăва. Çапла майпа асăннă постановленипе килĕшӳллĕн 2006 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче кăларнă Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 341-мĕш номерлĕ постановленийĕпе çирĕплетнĕ çурт-йĕршĕн, коммуналлă пулăшусемпе усă курнăшăн тӳлессинче социаллă пулăшу пама Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăрмалли Правилăсенче улшăнусем пулчĕç.**

**Мĕнлерех улшăнусем вĕсем тата камсене пырса тивеççĕ çак çăмăллăхсем? Çакăн çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ ЧР Сывлăх сыхлавĕ тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн тĕп специалист–экспертĕнчен С.Л. СКВОРЦОВАРАН. Акă мĕнле хурав пачĕ Светлана Леонидовна:**

– “Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн инвалид ача пур çемьесен пурăнмалли пӳлĕмшĕн (патшалăх тата муниципаллă çурт-йĕр фондĕнче тăракан çуртра пурăнакансен) тата коммуналлă пулăшусемшĕн (çурт-йĕр хăш фондра тăнине пăхмасăр) усă курмалли хакăн 50 процентĕнчен ытла тӳлемелле мар. Çак çăмăллăх централизациленĕ майпа хутса ăшăтман çуртсенче пурăнакансене те пырса тивет. Вĕсен те топливăшăн çур хакне çеç тӳлемелле.

**– Эппин, çӳлерех асăннă улшăнусем шăпах халь çеç асăннă категорисене пырса тивеççĕ. Тĕрĕс ăнланатăп-и?**

– Шăпах çапла. “Раççей Федерацийĕнчи инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен” федераллă саккунпа килĕшӳллĕн пурăнмалли пӳлĕме тытса тăма тата юсама, пӳлĕме найма илсе пурăннăшăн инвалидсене пырса тивекен çăмăллăх çапла вара çӳлерех асăннă улшăнусем хыççăн 60, инвалид ача пур çемьесен 80 процентпа танлашать. Урăхла каласан, инвалидсен тӳлемелли пĕтĕм хакăн 40 процентĕнчен, инвалид ача пур çемьесен 20 процентĕнчен ытлашши тӳлемелле мар. Çак çăмăллăха асăннă çăмăллăха тивĕçекен категорине кĕрекенсем йышăнакан лаптăкран е асăннă çăмăллăха тивĕçекен пĕччен çын йышăнакан лаптăкран шутласа параççĕ. Енчен те çак çăмăллăха илме тивĕçлĕ çын пурăнакан пӳлĕм çын пуçне социаллă нормăпа пăхнă лаптăкран пĕчĕкрех пулсан, çăмăллăха социаллă нормăпа пăхнă лаптăкран шутласа параççĕ.

**– Коммуналлă пулăшусемшĕн тивĕçекен çăмăллăха шутланă чухне мĕне шута илеççĕ?**

– Пӳлĕме ăшăтнăшăн тӳленĕ чух вара çăмăллăхпа усă курма тивĕçлĕ çын ăшăпа мĕн чухлĕ усă курнинчен тата çак çăмăллăхпа усă курма ирĕк пур граждансене çемьепе пĕрле пурăнакан пĕтĕмĕшле лаптăкран тивĕçекен лаптăкран е çак çăмăллăхпа усă курма ирĕк пур пĕччен пурăнакан çын йышăнакан лаптăкран шутласа параççĕ çăмăллăха. Анчах та çăмăллăх социаллă нормăпа пĕр çын пуçне тивĕçекен лаптăкран шутланинчен кая пулмалла мар.

Газпа, электроэнергипе, канализаципе, ăшă тата сивĕ шывпа усă курнăшăн вара çăмăллăха çемьери çак çăмăллăхпа усă курма право пур çынсем вĕсемпе мĕн чухлĕ усă курнинчен шутлаççĕ. Топливо туяннăшăн вара çăмăллăх мĕн чухлĕ лекнине халăха сутмалли нормăпа пăхнă сумăран шутласа параççĕ.

Инвалид ача пур çемьесене вара çăмăллăхсене мĕн пур лаптăкранах шутласа параççĕ.

**– Светлана Леонидовна, ăнланмаллараx пултăр тесен, тĕслĕхсем илсе кăтартсан аванччĕ.**

– Калăпăр, 4 çынран тăракан çемьере пĕри пĕтĕмĕшле чире пула – инвалид. Çемье 54 тăв. метр калăпăшлă 2 пӳлĕмлĕ хваттерте пурăнать. Çăмăллăх унпа усă курма ирĕк пур çынна çеç лекет. 54 тăваткал метртан вăл йышăнакан лаптăк 13, 5 тăваткал метр пулать. Социаллă нормăпа пĕр çын пуçне 18 тăв. м. тивĕçмелле. Çавăнпа та çурт-йĕре тытса тăнăшăн тата юсанăшăн тивĕçекен çăмăллăха çемьери инвалида 13,5 тăв. метртан мар, 18 тăв. метршăн шутласа параççĕ.

Е тепĕр тĕслĕх. 4 ачаллă çемьере инвалид ача пур. Çемье 53 тăв. м. лаптăклă хваттерте пурăнать. Саккунпа килĕшӳллĕн çăмăллăх пĕтĕм çемьене лекет. Социаллă нормăпа килĕшӳллĕн пĕр çын пуçне 18 тăв. м. тивĕçет. Ку çемьен пĕтĕмĕшле лаптăк 72 тăв. м. пулмалла. Апла пулсан асăннă çемье пурăнакан хваттер социаллă нормăпа пăхнинчен пĕчĕк. Çавăнпа та çăмăллăха социаллă нормăпа килĕшӳллĕн шутласа параççĕ, 53 тăв. метртан мар, 72 тăв. метртан шутлаççĕ.

**– Тавах, Светлана Леонидовна, каласушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ТĔП СУЙЛАВ КОМИССИЙĔН ЙЫШĂНĂВĔ**

**2007 çулхи сентябрĕн 13-мĕшĕ** **4/29-IV №**

**Муркаш районĕнчи муниципаллă пĕрлешӳсен суйлав комиссийĕсен полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурасси çинчен**

«Раççей Федерацийĕн гражданĕсен суйлав прависен тата референдума хутшăнмалли правин тĕп гарантийĕсем çинчен» Федераллă саккунăн 24-мĕш статйин 4-мĕш пункчĕпе, Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче вырăнти самоуправлени органĕсене суйласси çинчен» Саккунĕн 12-мĕш статйин 4-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн, депутатсен Муркаш район Пухăвĕ 2007 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче, Муркаш районĕнчи Муркаш ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕ 2007 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче, Муркаш районĕнчи Турай ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕ 2007 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче, Муркаш районĕнчи Юнкă ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕ 2007 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче, Муркаш районĕнчи Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи депутатсен Пухăвĕ 2007 çулхи сентябрĕн 6-мĕшĕнче ыйтнисене тĕпе хурса, Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссийĕ çапла йышăннă:

1. «Муркаш районĕ» муниципаллă пĕрлешĕвĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурас.
2. Муркаш районĕнчи «Муркаш ял тăрăхĕ» муниципаллă пĕрлешĕвĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурас.
3. Муркаш районĕнчи «Турай ял тăрăхĕ» муниципаллă пĕрлешĕвĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурас.
4. Муркаш районĕнчи «Юнкă ял тăрăхĕ» муниципаллă пĕрлешĕвĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурас.
5. Муркаш районĕнчи «Ярапайкасси ял тăрăхĕ» муниципаллă пĕрлешĕвĕн суйлав комиссийĕн полномочийĕсене Муркаш территори суйлав комиссийĕ çине хурас.
6. Çак йышăнăва пичетлесе кăларма массăллă информаци хатĕрĕсене ярса парас.

**Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссийĕн председателĕ Л.Н. ЛИНИК.**

**Чăваш Республикинчи Тĕп суйлав комиссийĕн секретарĕ Е.Б. ШЕВЛЯГИНА.**

**Райхаçат парнисене тивĕçнисем**

## Микрохумлă кăмака хуçи – В.М. Антонова



***Район хаçачĕн редакцине Шурчара пурăнакан Венера Михайловна Антонова Дмитрий ывăлĕпе , Елена хĕрĕпе тата пĕчĕк мăнукĕпе килчĕ. Сăлтавсăр мар. Телейлĕ выляв хуçи пулса тăнă Венера Михайловна, район хаçатне çырăнса илекенсем хушшинче ирттернĕ вылявра микрохумлă кăмакана тивĕçнĕ.***

***В.М. Антонова çулталăк хушши почтальонкăра, 8 çул хушши çыхăну уйрăмĕн ертӳçинче вăй хунă, халĕ «Сказка» ача садĕнче тăрăшать. Район хаçатне вара вĕсен çемйи çулленех çырăнса тăрать.***

***Мĕнех, апла пулсан телейлĕ выляв хăйĕн чăн хуçинех тивĕçнĕ.***

***В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.***

**Юбилей**

### Саламлатпăр

Ылтăн-кĕмĕлрен те хаклăрах, хĕвелтен те ăшăрах çыннăмăра – юратнă мăшăра, кăмăллă аннене, хисеплĕ тăвана – Анатри Панкли ялĕнче пурăнакан **Светлана Александровна ДАВЫДОВАНА** пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, ырлăх-сывлăх сунса пурнăçĕнчи паллă кун ячĕпе – 55 çул тултарнă ятпа ăшшăн-ăшшăн саламлатпăр. Çутă ăраскаллă кун-çул, вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Салампа мăшăрĕ, ачисем, тăванĕсем.**



Пирĕн хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăрсене, мăшăрсене, аттене, кукаçие тата хĕрĕме, аппана – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Георгий Леонидович ПУГАЧЕВПА Олеся Георгиевна ВАЛЕЖНИКОВАНА** çуралнă кунĕсем ячĕпе саламлатпăр. Пурнăçра иксĕлми телей, юрату тата нумай-нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх сунатпăр. Сирĕн ырă кăмăлушăн, чунчĕре ăшшишĕн тав тăватпăр, сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр.



**Саламлаканĕсем: мăшăрĕсем, хĕрĕпе ывăлĕ, кĕрĕвĕсем тата икĕ мăнукĕ.**